Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Яковлев Иван Яковлевич

## Книга: Сармантей

## Рассказ: Сармантей

Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать. Хапхи калать:

– Манӑн та уҫӑлса хупӑнас, – тет.

Анать вӑкӑр шыва куллен-кун.

– Хапха, эсӗ мӗншӗн уҫӑлса хупӑнатӑн? – тет.

– Уҫӑлса хупӑнмасӑр, – тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать.

Вӑкар калать:

– Манӑн та мӗкӗрсе анас, – тет. Мӗкӗрсе анать шыв хӗррине. Шыв калать:

– Мӗншӗн, вӑкар, мӗкӗретӗн?

– Мӗкӗрмесӗр, – тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать, хапхи те уҫӑлса хупӑнать.

Шыв калать:

– Манӑн та хумханас, – тет. Пӗр ҫӗнӗ ҫын шыв ӑсма анать:

– Шыв, мӗншӗн хумханатӑн? – тет.

– Хумханмасӑр, – тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать, хапхи те уҫӑлса хупӑнать, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет, тет.

Ҫӗнӗ ҫын калать:

– Манӑн та пӗр витрине ҫапса ҫӗмӗрес, – тет. Ҫапса ҫӗмӗрет витрине. Киле таврӑнать. Хунямӑшӗ чуста ҫӑрать.

– Кин, мӗншӗн хӑрах витрепе анчах ӑсса килтӗн? – тет.

– Ӑсса килмесӗр, – тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать, хапхи те уҫӑлса хупӑнать тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет, шыв та хумханать, тет.

Хунямашӗ калать:

– Манӑн та чустана кӑларса ывӑтас, – тет. Кӑларса ывӑтать.

Ывалӗ кайнӑ вӑрмана. Таврӑнать вӑрмантан.

Ывӑлӗ калать:

– Мӗншӗн яшка пӗҫермерӗр? – тет. Амӑшӗ калать:

– Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать, хапхи те уҫӑлса хупӑнать тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет, шыв та хумханать, ҫӗнӗ ҫын та хӑрах витрине ҫапса ҫӗмӗрнӗ.

Ывалӗ калать:

– Манӑн та хӑрах атта кӑларса ывӑтас, – тет. Кӑларса ывӑтать.

Пӗтрӗ.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.